


**Раççей Федерацийĕнчи Çемье çулталăкне тата**
**Чăваш Республикинчи Экологи культурипе çут çанталăка перекетлес**
**çулталăкне халалланă**
**«Чăваш ачи чăвашах» республика шайĕнчи 8-мĕш фестиваль**
**ПОЛОЖЕНИЙĔ**

## 1. Пĕтĕмĕшле калани

1.1. Раççей Федерацийĕнчи Çемье çулталăкне тата Чăваш Республикинчи Экологи культурипе çут çанталăка перекетлес çулталăкне халалланă «Чăваш ачи чăвашах» республика шайĕнчи 8-мĕш фестивале (малалла – Фестиваль) пуçараканĕсем тата йĕркелекенĕсем – Чăваш Республикин вĕренӳ министерствин хушма професси вĕрентĕвĕн «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» Чăваш Республикин бюджет учрежденийĕ (малалла – Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ), Чăваш Республикин «Чăваш наци ăслăлăхпа ӳнер академийĕ» общество организацийĕ (малалла – Чăваш наци ăслăлăхпа ӳнер академийĕ), Регионсен «Чăваш наци конгресĕ» общество организацийĕ (малалла – Чăваш наци конгресĕ) тата Чăваш Республикин Муркаш муниципаллă округĕн «А. Г. Николаев ячĕллĕ Калайкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул» пĕтĕмĕшле пĕлĕ паракан муниципалитет бюджет учрежденийĕ (малалла – Калайкасси шкулĕ)

1.2. Фестиваль – пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсенче чăваш чĕлхипе культурине аталанма пулăшмалли, вĕрентекенсен опытне сармалли мел.

## 2. Тĕллевĕпе задачисем

**Тĕллевĕ:** Чăваш шкулĕсенче тăван чĕлхепе культурăна аталантарасси.

**Задачисем:**

- Чăваш Республикин чĕлхесем çинчен калакан саккунĕпе килĕшӳллĕ пур вĕрентекене те уроксене чăвашла ирттерме хавхалантарасси;
- ачасене тăван халăх йăли-йĕркине тытса пыма хăнăхтарасси;
- шкул ачисен тăван халăх чĕлхипе литературине, историпе культурине вĕренес кăмăлне çĕклесси.

## 3. Фестиваль ырăнĕпе вăхăчĕ

3.1. Фестиваль 2024 çулхи ака уйăхĕн 6-мĕшĕнче Муркаш муниципаллă округĕн Калайкасси шкулĕнче иртет, 9:00 сехетре пуçланать.

3.2. Фестиваль çак адреспа иртет: Муркаш муниципаллă округĕ, Калайкасси ялĕ, Çамрăксен урамĕ, 3-мĕш çурт (Моргаушский муниципальный округ, д. Калайкасы, ул. Молодежная, д.3)

## 4. Хутшăнакансем

4.1 Фестивале Чăваш Республикинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп/вăтам шкул ушкăнĕсем ăмăртаççĕ. Пĕр шкултан хутшăнакансен шучĕ 15 çынран иртмелле мар. Вĕсен шутĕнче: шкул директорĕ е директор çумĕ, чăваш чĕлхи вĕрентекенĕ, «Вĕрентетпĕр чăвашла» ăмăртăва хутшăнакан чăваш чĕлхипе литературине вĕрентмен учитель, «Савăнатăп эп чăваш пулнишĕн» ăмăртăва хутшăнакан ачасем (7 ача таран) тата вĕрентекен, «Сар каччăпа сарă хĕр» ăмăртăва хутшăнакан 7-9 классенче вĕренекен пĕр хĕр ачапа пĕр арçын ача тата вĕрентекен.

4.2 Хӑнасен, ӑмӑртӑва хутшӑнакансен – пурин те Фестиваль вӗҫлениччен чӑваш тумӗпе пулмалла.

## 5. Фестиваль ӑмӑртӑвӗсем

- **«Вӗрентетпӗр чӑвашла»** (чӑваш чӗлхи предметне вӗрентмен учительсем хутшӑнаҫҫӗ, чӑвашла уроксем кӑтартаҫҫӗ);
- **«Савӑнатӑп эп чӑваш пулнишӗн»** (кӗҫӗн классенче вӗренекен ачасем чӑваш халӑхӗн пӗр-пӗр йӑлине кӑтартса параҫҫӗ);
- **«Сар каччӑпа сарӑ хӗр» (**7-9 классенче вӗренекен ачасем чӑваш халӑх историне, культурине, чӗлхине, йӑли-йӗркине пӗлнине ӑс-тӑн вӑййинче кӑтартаҫҫӗ);
- **«Тӑвалла пулсан та малалла»** (шкулта чӑвашлӑх туйӑмне аталантаракан шкулти чи ӑнӑҫлӑ проектсене директор е директор ҫумӗ хӳтӗлет).

## 6. Йӗрки

6.1. Фестивале хутшӑнма кӑмӑл пуррине ака уйӑхӗн 3-мӗшӗччен kalai-vr@mail.ru электрон адресӗпе ҫыру ярса пӗлтермелле (1-мӗш хушса пани)

6.2. Фестиваль программи улшӑнма пултарать (3-мӗш хушса пани). Тӗплӗнрех Калайкасси шкул сайтӗнче пӗлме пулать http://www.kalai-morgau.edu21.cap.ru е ВКонтакет соцсетри фестиваль сообществинче https://vk.com/event179890265

6.3. Фестивальте 4 секци ӗҫлет.

**1-МӖШ СЕКЦИ «Вӗрентетпӗр чӑвашла» ӑмӑрту – вӗрентекенсен пултарулӑх лаҫҫи.**

**«Вӗрентетпӗр чӑвашла» ӑмӑртура** 5-11 классенче чӑваш чӗлхи предметне вӗрентмен учительсем уҫӑ уроксем пани.

**Хаклав.** Конкурсра хутшӑнакансене чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентекенсем хаклаҫҫӗ. Урока йӗркеленине, темӑна интереслӗ те кӑсӑклӑ пама пултарнине, тӑван халӑх историйӗпе культурине урок темипе ҫыхӑнтарма пӗлнине, вӗрентекен пуплевӗн пахалӑхне, чӑвашла тӗрӗс те таса калаҫма пултарнине, урокра тӗрлӗ меслетпе меле усӑ курма, ачасене хавхалантарса ӗҫлеттерме пӗлнине хаклаҫҫӗ.

**Чыслав.** Кашни ҫынна ӗнентерӳ хучӗсемпе (сертификатсемпе), призерсене дипломсемпе чыслаҫҫӗ Ҫӗнтерӳҫе «Чӑвашлӑха аталантаракан чи хастар вӗрентекен» значокпа чыслаҫҫӗ.

**2-МӖШ СЕКЦИ «Савӑнатӑп эп чӑваш пулнишӗн» – кӗҫӗн классенче вӗренекен ачасен секцийӗ.**

**«Савӑнатӑп эп чӑваш пулнишӗн» ӑмӑртура** кӗҫӗн классенче вӗренекен ачасем чӑваш халӑхӗн пӗр-пӗр йӑли-йӗркине кӑтартса пани.

**Хаклав.** Конкурса кӗҫӗн классенче вӗренекен ачасен ушкӑнӗ хутшӑнать. Ушкӑнра 7 ачаран ытла пулмалла мар. 7-10 минут хушшинче чӑваш халӑхӗн пӗр-пӗр йӑлине кӑтартса памалла. Жюри членӗсем ачасем тӗрӗс те илемлӗ калаҫма пӗлнине, хӑйсене сцена ҫинче тивӗҫлӗ тытнине, ачасен тумӗпе йӑла-йӗрке содержанийӗ килӗшсе тӑнине хаклаҫҫӗ.

**Чыслав.** Кашни ушкӑна ӗнентерӳ хучӗсемпе (сертификатсемпе), призерсене дипломсемпе чыслаҫҫӗ Ҫӗнтерӳҫӗ ята тивӗҫнӗ ушкӑна куҫса ҫӳрекен кубок, пылак парне кӗтет.

**Ӑста урокӗ.** Ӑмӑртӑва хутшӑнакан ачасемпе библиотекарьсем «Вулавӑшри пӗр кун» вӑйӑ урок ирттереҫҫӗ.

**3-МӖШ СЕКЦИ «Сар каччӑпа сарӑ хӗр» - вӑтам классенче вӗренекен ачасен секцийӗ.**

**«Сар каччӑпа сарӑ хӗр» ӑмӑртӑва** 7-9 классенче вӗренекен ачасем хутшӑнаҫҫӗ. Пӗр шкултан пӗр хӗр ачапа пӗр арҫын ача пӗчӗк ушкӑн йӗркелет.

**Хаклав.** Фестивале хутшӑнакан хӗр ачапа арҫын ачан пӗр ушкӑн пулса тӑван халӑх историне, культурине, чӗлхине, йӑли-йӗркине пӗлнине ӑс-тӑн вӑййинче кӑтартса памалла.

**Чыслав.** Кашни ушкӑна ӗнентерӳ хучӗсемпе (сертификатсемпе), призерсене дипломсемпе чыслаҫҫӗ Ҫӗнтерӳҫӗ ята тивӗҫнӗ ушкӑна куҫса ҫӳрекен кубок, пылак парне кӗтет.

**Ӑста урокӗ.** Секцире хутшӑнакан ачасемпе «Чӑвашра вӑрман та чӑвашла кашлать…» вӑйӑ ирттерни.

**4-МĔШ СЕКЦИ «Тăвалла пулсан та малалла»** – директор е директор çумĕ тата чăваш чĕлхи вĕрентекен секцийĕ.

«Тăвалла пулсан та малалла» ăмăртура чăвашлăх туйăмне аталантаракан проекта директор е директор çумĕ хӳтĕлет.

**Хаклав.** Проект проблеми паянхи куншăн актуаллă пулмалла. Саккунсемпе килĕшсе тăмалла. Проекта пурнăçлама çĕнĕ мелсемпе усă курнине, тĕрлĕ ӳсĕмри çынсемшĕн интереслĕ пулнине, çĕнĕлĕхе хаклаççĕ. Проекта хӳтĕлекенĕн чăвашла уçăмлă, ăнланмалла каласа памалла, курăмлăх хатĕрĕсемпе вырăнлă тата тухăçлă усă курма пĕлмелле, проекта пурнăçлассине çирĕплетсе ĕнетнерме пултармалла.

**Чыслав.** Кашни çынна ĕнентерӳ хучĕсемпе (сертификатсемпе), призерсене дипломсемпе чыслаççĕ Çĕнтерӳçе «Чăвашлăха аталантаракан чи хастар шкул» ятпа чыслаççĕ.

**«Тăван кил-йышран хакли çук, тăван чĕлхерен асли çук» çавра сĕтел.**

Тĕллевĕ – чăваш халăхĕн патриотизм туйăмне ачасенче епле аталантарнине сӳтсе явасси. Ытти шкулсенче чăвашлăха аталантарас тесе мĕнле ĕçленине кăтартни, хăйсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарни, ачасене тăван халăха юрăхлă ӳстерес тесе малалла мĕнле ĕçлемеллине сӳтсе явни. Чăвашлăх туйăмĕ урлă çемьене тĕреклетме пулнине кăтартса парасси. Регламент 5-7 минут. Тухса калаçакансем валли – ĕнентерӳ хучĕ (сертификат).

## 7. Пĕтĕмлетӳ, чыслав

7.1. Фестиваль  пĕтĕмлетĕвĕ тата çĕнтерӳçĕсене чыслани ака уйăхĕн 6-мĕшĕнче Калайкасси шкулĕнче иртет.

7.2. Жюри членĕсем (2-мĕш хушса пани) çĕнтерӳçĕсене урок, йăла-йĕрке, ăс-тăн вăййи, проект хаклавĕсене шута илсе палăртать, пĕтĕмлетĕве протокола çыраççĕ.  Ăна жюри председателĕ е ун çумĕ алă пусса çирĕплетет.

7.3. Фестивале хутшăнакансене протоколĕсене кăтартмаççĕ. Фестиваль конкурс пĕтĕмлетĕвĕсем пирки апелляци йышăнмаççĕ.

7.4. Фестивале хутшăнакансене пурне те ĕнентерӳ хучĕ (сертификат) параççĕ.

7.5. Çĕнтерӳçĕсене диплом парса хавхалантараççĕ. Кашни ăмăртура 3 вырăн палăртаççĕ.

7.6. Фестивале ирттерекен ен ăмăртăва хутшăнакансен  автор прависене Раççей законĕсене пăхăнса сыхлать.

7.7. Фестиваль пĕтĕмлетĕвĕпе Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн сайтĕнче https://chrio.rchuv.ru е Калайкасси шкул сайтĕнче https://kalai-morgau.edu21.cap.ru паллашма пулать.

## 8. Тăкаксемпе çыхăннă ыйтусем

8.1. Чыславпа çыхăннă тăкаксене Калайкасси шкулĕ хăй çине илет.

8.2. Фестивале хутшăнакан ушкăнсем (шкулсем) çул укçипе тата апатланупа çыхăннă тăкаксене хăйсем çине илеççĕ.

## 9. Ыйтса пĕлмелли телефонсем

8 (83541) 65-2-53 – шкул директорĕ Ершова Татьяна Аркадьевна

8-927-846-11-73 – директор çумĕ Портнова Эльвира Владимировна

8-967-794-66-46 – чăваш чĕлхипе литература кафедрин ертӳçи Егорова Анна Семеновна

8-905-029-39-41 – чăваш чĕлхипе литература кафедрин методисчĕ Петрова Людмила Германовна